**“Вĕрентӳ” наци проекчĕн пĕр сыпăкĕ – учитель**

# “Хам суйланă ĕçшĕн ответлăха туятăп”, –

***тет паян хăйĕн ĕçĕнче пуян опыт пухнă, ял хушшинче ырă ята тивĕçнĕ С.В. ФЕДОРОВА***



Учитель. Яла хутла вĕрентесси çитнĕренпех чăвашсем хушшинче ырă ята тивĕçнĕ професси. Йывăр-и, çăмăл-и, савăнăçлă хыпар çитет е хуйхă пусса килет – ял çынни пĕр шутласа тăмасăрах вĕрентекен патне утать, вăл тивĕçлĕ сĕнӳ парасса, лару-тăрăва çителĕклĕ хакласса, пулăшасса кĕтет. “Савăнăçа çынпа пайласан – вăл икĕ хут ӳсет, хуйхăна пайласан – вăл икĕ хут чакать”, – тенине шута илсе, чунне лăплантарса тухать хăйхискер вĕрентекен патĕнчен. Çакна ытти çынсем пекех Светлана та ачаранах курса-туйса ӳснĕрен, пĕчĕк чух сывлăх хуралçи пулма ĕмĕтленнĕскер, вунă класс пĕтерсен учитель çулне суйласа илет. Акă 25-мĕш çул ĕнтĕ вăл ялти вĕрентекен.

Пуян ĕç опычĕллĕ, районăн Хисеп грамотисене пĕрре мар тивĕçнĕ, маттурлăхне кура Чăваш Республикин Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствин Хисеп грамотипе наградăланнă, 2006 çулта Раççей Федерацийĕнчи ял хуçалăх çыравĕнчи обществăлла хастарлăхшăн кăкăр çине çакмалли паллăна илнĕ Светлана Васильевна Федоровапа вăл чĕрĕк ĕмĕре яхăн вăй хуракан Çатракассинчи вăтам шкулта уроксем хыççăнхи пушă вăхăтра калаçса ларатпăр. Хăйĕн ĕмĕрне ачасене вĕрентес ĕçе халалланă пĕлĕшĕмĕн уроксем вĕçленнине пăхмасăрах ĕçĕсем пĕтмен-ха: килти ĕçсене тĕрĕслемелле, çитес урокра ачасене кăтартмалли курăмлă çĕнĕ материалсем хатĕрлемелле, “Свобода” хуçалăхри хĕрарăмсен канашĕн ĕç планне пăхса тухмалла (хуçалăхри хĕрарăмсен канашĕн председателĕнче 6-мĕш çул) .

– Мĕн тăратрĕ-ха Сире учитель çулĕ çине? Саспалли палламан, хисеп пĕлмен ачасене вулама-çырма, çиччĕ виççе шутлама вĕрентесси çăмăл ĕç мар. Анчах эсир çакăнпа çеç лăпланмастăр, обществăлла ĕçре те активлăх кăтартатăр?

– Камăн ĕçĕ çăмăл-ха. Пĕр пĕрчĕрен пучах ӳстерекенĕн-и, алса тулĕ пек çураран хамăр хуçалăхри пек ăратлă сысна çитĕнтерекенĕн-и, канури ĕçчене ташласа-юрласа савăнтараканăн-и? – пулчĕ хирĕçле ыйту.

– Эсир – ялти вĕрентекен – халĕ хăвăр каланисенчен пĕринчен те юлмастăр. “Чăн поэт ака та тутăр, утă çултăр, вутă çуртăр, туй пулсан ташлатăр, култăр”, – тет те поэтăмăр, ку йăлтах сирĕн пирки каланăн туйăнать, – сăмах çиппине тăсатăп малалла.

– Эпир халăх хушшинче пурăнатпăр та пирĕн урăхла юрамасть. Ачисене вĕрентмелле, кил хуçалăхне ялти çынран кая юлмасăр тытса пымалла т. ыт. те. Раççейре юлашки çулсенче ыттисемпе пĕрлех “АПКна аталантарасси”, “Вĕрентӳ” наци проекчĕсем ĕçлеме пуçлани çĕршывра пăр тапраннă пекех туйăнчĕ. Вĕсене çывăха илнĕ çын паян ыранхи куна çирĕппĕн пăхайрать. Вĕрентӳ ĕçне çĕнĕлле йĕркелеме çул уçăлни, ачасем умне çĕнĕ тĕллевсем тухни, ял хуçалăхĕнче çĕнĕ технологисем вăй илни вĕрентекен умне те çĕнĕ тĕллевсем лартать. Пирĕн çакна хатĕр пулмалла, – лăпкăн калаçать наци проекчĕ ĕçлеме пуçласан компьютер пĕлĕвне малтисен шутĕнче алла илнĕ Светлана Васильевна тĕрĕслесе пĕтернĕ тетрадьсене айккалла илсе хурса. – Пирĕн тĕрĕс ăнланăва ачасем те кураççĕ. Авă епле тĕрĕс çырнă паян вĕсем.

Учитель вăхăтра тĕрĕс хаклани. Пур-ши унран пахараххи? Çакăн çине хирĕçле хурав парас пулсан Светлана Васильевна та паян вĕрентекен пулман пулĕччĕ. Нумай ачаллă колхозник çемйинче ӳснĕскер, Светлана пединститут алăкне тытсанах хăй учитель пуласса шутламан та. Анчах тĕллев тытнă хĕре институт стенисем кĕçĕн классен вĕрентекенĕ пулма шăратса-туптаса кăлараççех.

– Пĕрремĕш курсра мĕншĕн учитель профессине суйлани пирки сочинени çырма хушсан пĕтĕм шухăшăм çемçе кăмăллă пĕрремĕш вĕрентекен Вера Ильинична Никитина, урокĕсене шăна вĕçни илтĕнмелле ирттерекен чăваш чĕлхипе литературин учительници Елизавета Васильевна Иванова тавра пулчĕ. Вĕсем пек пулас тесе, вĕсен ĕçне хакласа çыртăм эпĕ вăл сочинение. Шăпах çав саманта тымарланчĕ те ĕнтĕ эпĕ мĕнле учитель пуласси. Тавах вĕсене мана пурнăç опычĕ панăшăн, – терĕ ырă тунине ырăпа тавăрма вĕреннĕ С. Федорова.

Ялти 121 ачана вуламаçырма вĕрентнĕ Светлана Васильевна Федорова хăй те мăшăрĕпе Николайпа виçĕ ача çуратса ӳстернĕ. Пĕрремĕш категориллĕ вĕрентекен пĕлӳ çулĕ çине кăларнă ачасем хушшинче паян учителĕ те, спортсменĕ те, журналистпа бухгалтер та, юристпа агроном та, сывлăх хуралçи те пур. Вĕсенчен кашниех хăйсене районти çамрăк техниксен станцийĕ урлă йĕркеленĕ кружоксенче тĕрлĕ теттесем ăсталама, тĕрĕ тĕрлеме вĕрентнĕ, шкулти хор коллективĕнче уçă сасăпа чăваш юррисем шăрантарнă, уявсем валли хăй çырнă сценарисемпе савăнăçлă каçсем ирттернĕ Светлана Васильевнана ырăпа асăнаççĕ, канмалли кунсенче е ĕçрен пушаннă вăхăтра ун патне кĕрсе тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе яваççĕ, канашлаççĕ. Пирвайхи вĕрентекен вĕсемшĕн ĕмĕрĕпех вĕрентекен.

**А. ПЕТРОВ.**

**Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслетпĕр**

# Пыл тенипех пыл тутине пĕлеймĕн

Пурнăç уттипе тан пыма вĕрентетчĕç пире пурнăç тутимасине курнă атте-аннесемпе аслăрах ăрури çынсем ачалăх çулĕсенче. Вĕсем ун чух панă ырă сĕнӳсемпе паян эпир хамăр ачамăрсене ăс паратпăр. Çакă çур акирен хура кĕркуннеччен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен уй-хирĕсенче ĕçленĕ техникăна хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ чух та çаплах пулмалла пек, анчах вырăнсене çитетĕн те... Куллен шкула машинăпа трактор паркĕ çумĕпе иртсе çӳрекен шкул ачисем ашшĕсем е аслăрах ăрури ытти



**Выльăх апачĕ хатĕрленĕ “Волга-2” агрегат калчапа витĕнсе ăшă упрать.**

пиччĕшĕсем çуркуннерен кĕркуннеччченех хирте хăйсем ĕçленĕ техникăна ĕç хыççăн парка çитерсе тĕлсĕр-палсăр лартнинчен, ĕнер кăна-ха кирлĕ пулнă техника çине вĕсем паян алă сулнинчен пуç пăрса иртсе кайни камшăн килĕшӳллĕ-ши? Çамрăксене çакнашкал пĕлӳ паракан “воспитательсем” хăйсене тĕкĕртен пăхаççĕ-ши? Ăнланатăн пуль, вулаканăм, ку ыйтусем хуравсăр. Паян вара пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен машинăпа трактор паркĕсене çитсен кун пек ыйтусем пĕрин хыççăн тепри ума тухаççĕ. Вĕсен хуçисем Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çул панă “АПКна аталантарасси” приоритетлă наци проекчĕ хăйсем умне каплланнă йывăрлăхсене хăех сирет тесе шутлаççĕ пулас. Йăнăшаççĕ вĕсем, пыл тенипех çăвара пыл лекмест çав. Наци проекчĕн уссине курас тесен те малтан çанă тавăрса ĕçлес пулать. Ыранхи кунпа пурăнаканшăн паян пур çулсем те уçă. Паянхи тĕслĕхре вара пирĕн калаçу ыранхи кунпа пурăнманнисем çинчен.

–Кашни ĕçĕн вăхăчĕ пур, – тет ĕç тĕлне пĕлекен çын ыранхи пирки шутласа. Çапла шутласа умри ĕçсене кая хăвармасăр пурнăçлама мĕн пур вăйхăвата пуçтарать вăл. Акă хыça юлакан ял хуçалăх çулĕ те кăçал хресчен ĕç технологине пăхăнса ĕçленине çирĕп тĕрĕслерĕ. Тимлĕ те малалла пăхса ĕçлекенсем “çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен” тенине çиеле кăларчĕç. Хĕле кĕнĕ май çав хуçалăхсенче пулса куратăн та ял хуçалăх техники çĕр ĕçĕнче вăхăт ирттернине пĕлейместĕн те: сăрласа-çуса-тасатса гаражсене управа кĕртсе лартнă вĕсене.

Теприсен вара...

К. Иванов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа трактор паркне çитсен Ятмансемпе Шупуçсем, Очăкассисемпе Торинкассисем кăçал ĕçленĕ техникăпа çитес çул та тыр-пул туса илес тесе шутламанни курăнчĕ. “Пус çумне пус хушăнать”, – тет укçа шутне юратакан. Анчах асăннă хуçалăхра укçа шутне пĕлменни, ыранхи пирки шутламанни, “АПКна аталантарасси” наци проекчĕпе килĕштерсе пурăнманни малти вырăнта тăрать. Халĕ каланине паянхи сăн ӳкерчĕксем те уçăмлă çирĕплетеççĕ. Ăçта кунта хĕл умĕнхи йĕрке? Хуçалăхра хуçасăрлăх аталаннине çирĕплетмест-и-ха куç умне пулнă ӳкерчĕк? Хирĕçле хуравлаймăн та. Хирсем шурă кавирпе витĕннине пăхмасăрах хĕл çывхарни пирки, хыççăн çур аки те çитесси çинчен, çак ответлă ĕç тапхăрне 30 градуслă сивĕре метр хулăнăш юр айĕнчен техникăна шыраса тупса юсама майĕ çуккине шутламанни К. Иванов яч. хис. хуçалăхри паянхи чăнлăх.

Хиртен çитсе ăçта кирлĕ унта вырнаçнă, пылчăкран тасалайман, симĕс калчапа витĕннĕ, çур акири тырă вăрлăхĕнчен те пушанайман техника Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин кун çути панă наци проекчĕпе, Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров ялсене çĕклеме кăларакан йышăнусемпе “кĕрешсе” хамăр япăх пурăннин сăлтавĕ хамăртах пулнине çирĕплетеççĕ. “Сывă пултăр..! Юхăнать-тăк юхăнтăр”, – теççĕ пулас хăйсем çинчи ответлăха сирсе тата хăйсем мĕншĕн ĕç укçи илнине манса, вăл мĕншĕн пĕчĕкки пирки шутламасăр хăш-пĕр “специалистсемпе” “механизаторсем”. Тĕрĕссипе кун пек ĕç хыççăн ĕç укçи илме те намăс пулмалла.

Пĕр пек условисенчех пурăнатпăр та, кӳршĕллĕ “Свобода” хуçалăхра ĕнер хирте ĕçленĕ техника паян пĕтĕмпех гаражсенче ларнине куратăн та ку хуçалăхăн ĕç тухăçлăхĕ те пысăкрах пулнинчен тĕлĕнмелли те юлмасть. Акă ăçта вăл укçатенкĕ, экономика тĕрекĕ.

– Çĕршыв ĕçлекене пулăшать. Çак пулăшупа туллин усă курма çывăрмалла мар, çанă тавăрса ĕçлемелле, – тет Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров. Анчах хулăн ӳтлисем çакна илтмеççĕ, çынсем умĕнче “наци проекчĕсемпе çĕнĕ технологисем” пирки чарăнмасăр калаçаççĕ.

Патшалăх техника надзорĕ техникăна упрама ятарлă вырăнсем йĕркелеме ыйтать. К. Иванов яч. хис. хуçалăх паркĕнче те пур вăл. Малашлăха пăхакансем кунти асфальта тайлăкрах сарнăран ун çинче шыв та тăмасть. Анчах эпир пулнă кун (иртнĕ эрнере) унти таса вырăнта пĕр техника та çукчĕ. Çав вăхăтрах 30-40-50 метр айккинерехри çум айĕнче йывăр дисклă сӳресем те, çĕнĕлле ĕçлеме тунă йĕкĕрлĕ культиватор та, ытти техника та штоксен çутипе хăйсем пурри пирки систереççĕ. Эпир куртăмăр вĕсене, анчах хуçисен куçĕ тĕлне пулĕç-ши вĕсем хальтерех? Çулталăк каялла техникăна хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ чух тĕл пулнă КПКУ-75 агрегат кăçал выльăх апачĕ хатĕрлеймен пулас, вырăнне те



**Кашмаш мехпаркĕнчи çак гаражсене юр та кĕмест, унта упранакан техникăна çумăр та йĕпетмест. Тĕслĕх мар-и ыттисемшĕн çакă?**

улăштарайман, çулталăк хушшинче управа та ларайман. Çĕршывра наци проекчĕ сулмаклă утăмсемпе утнă чух маннă ун çинчен кунта. Çавăн пекех çур акире акнă хыççăн сеялкăсенче юлнă тата кĕрхи нӳрĕкпе шит çӳллĕш шăтса кайнă урпа вăрлăхĕ те, вăхăт иртнипе кăвакарнă-шăршланнă нумай çул ӳсекен курăк вăрри те ку тăрăхра мал туртăмлă пурăнманни çинчен калать. Сеялкăсенче хĕл каçнă урпапа тулă тата нумай çул ӳсекен курăк вăрри хыççăн çитес çулхи çур акире вăл агрегатсемпе тухăçлă ĕçлеме пулĕ-и? Иккĕленмелле. Çакăн хыççăн кайран хамăр япăх пурăннишĕн кама вăрçăпăр? Хамăра кăна ятламалли юлать. Сеялкăри шăшисемпе кунсерен вăй илекен тутăх вара пĕр сăмах та хирĕçлемĕç. Вĕсен хăйсен наци проекчĕ, хăйсен экономики, хăйсен технологийĕпе тепĕр тĕрлĕ бюджечĕ...

Чӳк уйăхне кĕтĕмĕр. Тавралăх шурă кавирпе витĕнчĕ. Михал кунĕ çывхарать те юр ирĕлсе каясси, управа лартман техникăна тирпейлесси халĕ тин иккĕленӳллĕ. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Кăçалхи пирĕн çитменлĕхсене юр картлĕ-ха та, анчах çитес çул мĕн курăпăр капла?

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**



**Улăм пуçтарса ывăннă рулонлă пресс-подборщик намăс-симĕсрен юр картласса кĕтет.**



**Кĕрхи ăшăпа та нӳрĕкпе сеялкăра шит çӳллĕш шăтса кайнă урпа калчине кам çийĕ-ши? Ку агрегат çитес çул та ĕçе тухĕ-ши?**



**БДТ çум айĕнчен тухĕ-ши?**



**Юрпа витĕнет ĕнтĕ управа лартман косилка...**